# Çемье династине пуçараканĕ

В. КОНСТАНТИНОВ

Çирĕп тĕллевлĕ пулнă çав ун чухнехи çамрăксем. Хăйсем кам пулассине малтанах палăртса хунă та — ĕмĕтне пурнăçличченех тăрăшнă. Шăпах çавнашкал яшран пĕри пулнă Çĕнĕ Йĕкĕтри 1892 çулхи июнĕн 25-мĕшĕнче çуралнă Сергей Тихонов. Вĕренсе çынна тухас, учитель пулас шухăшпа çунатланнă вăл. Упири чиркӳ прихут шкулĕнче 4 класс вĕреннĕ, Тивĕшри икĕ сыпăклă шкула та мухтав хучĕпе пĕтернĕ. Етĕрнери реальнăй училище çумĕнчи пуçламăш шкул учителĕсем хатĕрлекен класра тĕрĕслев витĕр тухать. Тивĕçлĕ хута алла илнĕ çамрăка Тури Юнтапа ялне ярaççĕ. Шăпах çакăнти тин уçăлнă шкулта хутла вĕрентме пуçлать С. Тихонов. Вăтăр сакăр çул хушши пĕр коллективра тăрăшать, ăна пуçаруллă ертсе пырать. Хăй телейне тупса çемье çавăрать. Çичĕ ачине те, ялти ытти çамрăк пекех, тарăн пĕлӳ парса анлă çул çине кăларать. Ăста педагога медальсемпе, 1949 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Ленин орденĕпе наградăланă. Шел, С. Тихонов шăпи шăпах 54 çул каярах сӳннĕ.

Мăшăрĕпе икĕ ывăлпа пилĕк хĕр çуратса пăхса ӳстернĕ, тивĕçлĕ ĕç суйласа илме пулăшнă, вĕсенчен виççĕшĕ ашшĕн пархатарлă профессине суйласа илнĕ. 1921 çулхи Михаил Вăрнар районĕнчи пĕр шкул коллективне ертсе пынă. Унăн кунçулĕ иккĕмĕш тĕнче вăрçинче татăлнă. Антонина та кĕçĕн классене вĕрентнĕ. Валентина кунçулне вăтам шкулпа çыхăнтарнă, Сĕнтĕрвăрри районĕнче халăха вĕрентес пайăн методика пулăшăвĕн пӳлĕмне ертсе пынă.

Толя Тихонов "Канаш" колхозра электрикре тăрăшнă. Зоя халăх сывлăхне сыхлас ырăнта ырми-канми вăй хунă. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччене Мăн Шетмĕри больницăра аслă медсестрара тимленĕ. Роза обществăлла апатлану предприятийĕнче, "Химпром" пĕрлешӳре тăрăшнă, Людмила Шупашкарта тĕпленнĕ, лента тĕртекен фабрикăра ĕçленĕ.

Сăмах май каласан, Сергей Алексеевичăн аслă пиччĕшĕн çемйинче те педагогсем пур. Акă, Упири вăтам шкулта ĕçлекен Иван Петрович Матвеевсен кил-йышĕнче — виçĕ учитель. Мăшăрĕ, Валентина Петровна, хăй килĕштернĕ ĕçренех тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Мария хĕрĕ те ашшĕ-амăшĕн çулне такăрлать.

Кун-çулне Канаш районĕпе çыхăнтарнă Сергей Алексеевич. Апла пулин те, Çĕнĕ Йĕкĕтсем хăйсен паллă педагогне, Ленин орденĕн кавалерне манмаççĕ.